## АВГУСТĂН 6-МĔШ КУНĔНҪЕ ТУХНĂ ПАТША МАНИФЕСТИ ҪИНҪЕН.

Ҫак ҫулта, ҫурла уйăхин 6-мĕш кунĕнҫе пирĕн Патша пысăк ес пусласа хунă. Вăл ĕҫ халăха пит пысăк усă кÿмелле.

Ку таранҫҫен пирĕн Патша халăха улпутсем (ĕҫлĕ ҫынсем) урлă пăхса тăнă, халăх мĕнле пурăннине, халăха мĕн кирлине те вĕсенҫенех пĕлсе тăнă. Патшалăха пăхса тăрасси ҫăмăл ĕҫ мар. Ҫавăнпа Патша ҫурла уйăхин 6-мĕш кунĕнҫе ак мĕнле туса хунă: пĕтĕм патшалăхран 412 ҫын суйласа илмелле те, Питĕрте пуху тумалла. Вăл пĕтĕм патшалăх пуххине вырăсла Государственная Дума теҫҫĕ. Ҫав 412 ҫыннăн халăх ăҫта мĕнле пурăннине, ăпа мĕн кирлине каласа тăрса Патшапа пĕрле ĕҫ туса тăмалла.

Ку кĕнеке ҫинҫе епĕ ҫăвашсене ҫав Патшалăх пуххи ҫинҫен каласа ăнлаптарасшăн, вăл пысăк ĕҫ мĕнле-мĕнле усă кÿрессине каласа пĕлтересшĕн. Епир пурăнакан Вырăс патшалăхĕ тĕнҫере ҫӑн пысăкки. Унăн мал йенҫи ҫиккипĕ кай-йенҫи ҫикки хушши *10,060* ҫухрăм, ҫур-ҫĕр йенҫипе кăнтăрлăрин—*4,383* ҫухрăм; Хусан кĕпĕрни пек кĕпернесем тусассăн-*350* кĕпĕрне тухмалла, Йетĕрне уйасĕ пек уйассем тусассăн-*6,500* уйас тухмалла. Вырăс патшалăхĕнҫе халăх 140 миллiон ҫун пурăнаҭ, вĕсенҫен 150-мĕш пайĕ ҫăвашсем. Унта вырăсна ҫăвашран пуҫне тата 60-тан ытла тĕрлĕ ҫĕлхепе калаҫакан халăх пурăнаҭ. Вĕсене ҫăвашсем пурне те пĕлмесен те, хăшне-хăшне пĕлеҫҫĕ: тутара, мăкша, ҫармăса, пушкăрта,

кăркăса пĕлеççĕ. Вырăс патшалăхĕнђи халăхсем хулара та йалта та пурăнаççĕ, тĕрлĕ ĕçпе тăранаççĕ. Хăшĕ çĕр ĕçлесе тыр-пул акса пурăнат, хăшĕ хапрăкра-савăтра ĕçлет, хăшĕ сут тăват, тата хăшĕ-хăшĕ пĕр-пĕр ĕçре ларат: улпутра, пупра, уђђиттĕлре пурăнаççĕ. Хăш кĕпĕрнере халăх пит нуммай, хăшинђе сахал; халăх сахал çĕрте ахаљ выртакан, хаљђђен сухаламан вырăнсем пур. Тата хăш кĕпĕрнере хапрăк-савăтсем пит нуммай, хăшинђе пĕртте сук; хăпрăк-савăт нуммай çĕре тăçти халăх та ĕçлеме пухăнат.

Тĕрлĕ çĕрти халăхăн тĕрлĕ хуйхă, тĕрлĕ ĕмĕт. Патша халăха мĕн-мĕн кирлине, вăл мĕн ĕмĕтленнине, унăн пурăнăçне мĕнле йўнеçтермеллине пĕлесшĕн. Çавăнпа та Вăл Патшалăх пуххи тума хушнă. Çынсене Питĕре суйласа йарăсси пит кирлĕ ĕç, ăна лайăх шухăшласа тумалла. Вăл ĕç йе ерехпе, йĕ вăрттăн укçа парса, йе пĕр-пĕр уллах çĕрте тумăлли ĕç мар. Вăл ĕçе патшана та пĕтĕм халăха та усăлă пултăр тесе тумалла.

Малалла епĕ сире Патшă мĕнле суйлама хушнине каласа парам. Патшалăх пуххине Хусан хулинђен пĕр çын суйласа йамалла, Хусан кĕпĕрнинђи уйассенђен—9 çын; Ђĕмпĕр кĕпĕрнин 6 çын суйласа йамаллă, Самар кĕпĕрнин—13, Уфа кĕпĕрнин—10, Саратту кĕпĕрнин—11. Кунта епĕ ђăвашсем пурăнакан кĕпĕрнесен çинђен анђах çыратăп. Уйассенђе ак çапла суйламалла. Малтăн йалсенђен харпăр-хăй кантурне вăйпĕрнисем пухăнаççĕ. Вăл вăйпĕрнисен кантурсерен икшер çын суйлăмалла; вăл икĕ çынна вĕсен хăйсен хушшинђен те, ытти çынсенђен те суйлама йурат (§ 17), анђах йут кантур çынни ан пултăр. Пĕр-пĕр йала вăйпĕрнисем пит шанђăклах пек туйăнмасан, вал йал урăх вăйпĕрнисене суйлаттарма пултарат. Вăйпĕрнисем харпăр хăй уйас хулине кайса пуху тăваççĕ. Вăл пухха *избирательное собраніе* теççĕ (суйлакăн пуху). Унта вăйпĕрнисем хăйсен хушшинђен çынсем суйлаççĕ; вăл çынсене „суйлакансем" теççĕ (вырăсла—выборщики).

Ҫикмери вăйпĕрнисен 6 суйлакан çын суйламалла.

Сĕве хулин . . . . . . . . 5
Сăпас хулин . . . . . . . 6
Тетĕшĕн . . . . . . . . . 10
Çĕрпÿн . . . . . . . . . . 8
Шупашкарăн . . . . . . . 6
Ҫистайăн . . . . . . . . . 13
Йетĕрнен . . . . . . . . . 9
Хусан уйасин . . . . . . 11
Лаишăн. . . . . . . . . . 6
Мамадышăн . . . . . . . . 11
Царевококшайскăн (Ҫар-Хулин) 7

Çапла вара Хусан кĕпĕрнинҫи хура халăхран суйлакансем мĕн пурĕ 98-ăн пулаççĕ. Çав суйлакансен каланă вăхăта Хусана çитмелле. Унта вĕсем пĕр-пĕринпе лайăх, тĕплĕ шухăшласа хăйсем хушшинҫен пĕр шанҫăклă çынна суйлаççĕ, Питĕре Патшалăх пуххине йамашкăн. Вăл çынна *депутатъ* теççĕ.

Унтан хура халăхăн суйлаканнисем патне 23 çын помĕщиксем суйлани, 18 çын хуласем суйлани хутшăнаť. (Помĕщик тесе çĕр çисе тăракан улпута калаççĕ). Çапла вара суйлакан мĕн пурĕ 139 çын пулаť. Çав суйлакансен Патшалăх пуххине йамашкăн хăйсен хушшинҫен 8 çын (депутат) суйламалла. Çав 8 çынна хура халăх çыннисенҫен те, ыттисенҫен те суйлама йураť.

Çапла ĕнтĕ хура халăх хăй ĕссĕн пĕр çын суйлаť, тата ытти 8-ăшне камран суйласси те хура халăхранах килет, мĕншĕн тесен унăн суйлаканĕсем 98-ăн, ыттисен 41-ĕн анҫах.

Халĕ епĕ сире ак мĕнле ăс парасшăн: вăйпĕрнисен лайăх. йĕркеллĕ çынна, халăх пурăнăçне тĕппипе пĕлекене суйламалла. Суйлани çукрах çын пулсас ăп. ăна уйăс хулине

каймашкăн халăхран укçа памалла, кĕпĕрне хулине кайма суйласан, унта кайма та памалла. Суйланă çынсен кĕпĕрне хулинче теп темиçе кун пурăнмалла пулĕ, çавăнпа вĕсене укçа чилай кирлĕ пулĕ, халăхран пĕр 30 тенкĕ парас пулать. Татах калатăп: тăкакшăн тăма йурамасть, суйланă çыннисем лайăххисем пулччăр-чĕ.

Хусантан суйласа йанă 9 çын Питĕрте 5 çулчен ĕçлемелле. Питĕрте пурăннă вăхăтра çынсерен кунне 10-шар тенкĕ шалу çисе тăмалла. Питĕрте вĕсен çулсерен 100-шер куна йахăн пурăнмалла пулать. Питĕрте пурăнма хаклă пулсан та, вăл укçа унта пурăнма çитме мар, унтан йулмалла та. Питĕре пĕр шалушăн анчах кайсан халăха ним усси те пулас çук, çавăнпа та халăха усă кÿме пултаракан çынна анчах суйлас пулать.

Патшалăх пуххине лайăх çынна суйламалла терĕм епĕ. Мĕн тени пулать вăл? Акă мĕн тепи. Усал çын хăйшĕн анчах тăрăшать, хăйне усă тăвасшăн усал ĕçсем тума та хатĕрех вăл: çыннăнне илме, çынна тăпман тума, суйа сăмах калама—унăн ĕçĕ.

Лайăх çын çыннăнне илме мар, çынна усă кÿресшĕн тăрăшать, ырă ĕç тăвать. Çавăн пек çынсене суйламалла, пĕтĕм патшалăхшăн тăрăшса халăха усă кÿчĕр вĕсем.

Суйланă çынсем харпăр хăй уйасĕшĕн, хăй халăхĕшĕн анчах тăрăшни те лайăх мар, апла вĕсем пĕр-пĕринпе тавлашса пĕтĕç, никама та усă кÿреймĕç. Çавăнпа пуриншĕн те тан тăрăшакан анчах усă кÿме пултарĕ.

Патшалăх тĕлĕшĕнчен ĕç пит нуммай: ăна йут халăхсем тапăнасран сыхламалла, усал çынсем йăваш çынсене пусмăрласран сут йĕркине тĕрĕс туса хумалла, лайăх больницасем, лайăх школасем тутармалла, çул тавраршне йусав тăратмалла. Патшалăх пуххи ĕнтĕ çав ĕçсем çинчен шухăшласа сăмах каласа памалла. Шухăшласа пăхăр-ха ĕнтĕ, чăвашсем, хăйшĕн анчах тăрăшакан çынна суйлама йурамал-

ла-и? Патшалӑх пуххине пӗтӗм патшалӑхӗшӑн тӑрӑшакан ҫынсене суйласа йамалла.

Ҭӑвашсем выръннӑн-выръннӑн вырӑссемпе, тутарсемпе, ҫармӑссемпе хутӑш пурӑнаҫҫӗ, ҫавӑнпа ун пек ҭӑвашсен кама суйламалли ҫинҭен вӗсемпе канаш тумалла. Ҭӑвашсене вӗсемпе канаш тумашкӑн йывӑр мар, мӗншӗн тесен хура халӑхӑн ӗмӗҭӗсем тутарӑн та, вырӑсӑн та, ҭӑвашӑн та, пурин те пӗр пекех, анҭах ҭӑвашсен хӑйсене тӗллӗн кирли те пур. Нимрен ытла ҭӑвашсене лайӑх школасем кирлӗ, унтан тата ҭиркӳсенҭе ҭӑвашла кӗл-тумалла тӑвас пулать. Ҫавӑнпа хӑш-хӑш ҫӗрте хӑйсен хушшинҭен суйлама май килмесен, ытти йӑхран пулсан та, лайӑх ҫынна, ҭӑваш школӗсем ҫинҭен, ҭӑвашла кӗл-тумалли ҫинҭен тӑрӑшакан ҫынна суйламалла.

Суйланӑ ҫынсем Питӗре ҫулленех пухӑнмалла; унта вӗсен питӗ кирлӗ мӑн ӗҫсем ҫинҭен канаш тумалла: куланай пухасси ҫинҭен, ӗҫлӗ ҫынсене шалу парасси ҫинҭен, халӑх ҫурҭӗсем ҫинҭен, ҫар тытма, карапсем тума мӗн ҭухлӗ укҫа кирли ҫинҭен, патшалӑха, халӑха мӗн кирли ҫинҭен канаш туса ӗҫ татаҫҫӗ.

Патшалӑх пуххи усӑлӑ ӗҫсем тусассӑн, ӳлӗмрен Патша ӑна урӑх тӗрлӗ те тӑвасшӑн. Ҫавӑнпа хура халӑхӑн йепле те пулсан ӑслӑ, тӗплӗ шухӑшлакан ҫынсене суйласа йамалла. Вӗсен хура халӑх Патшашӑн та, пӗтӗм патшалӑхшӑн та шанҭӑклине, усӑллине Патшана кӑтартас пулать; вара Патшалӑх пуххи ӗмӗрех пулӗ-ҭҭӗ, хура халӑх хӑй хуйхине, хӑйӗн ӗмӗтне улпутсем урлӑ мар, хӑйсем суйланӑ ҫынсенҭен кала-кала кӑтартӗ-ҭҭӗ.

Тата ҭӑвашсем пурӑнакан ытти кӗпӗрнесем ҫинҭен ҫыратӑп.

Ҭӗмпӗрте суйлакан (выборщики) 90 ҫын пухӑнать; вӗсенҭен 46-шне ҫӗр ҫисе тӑракан улпутсенҭен суйламалла, 44-шне—хура халӑхран. Хура халӑхран ак ҫапла суйламалла:

| | |
|---|---|
| Ҫӗмпӗр уйасӗнҫен . . . . | 5 ҫын. |
| Улатӑртан . . . . . . . . | 5 |
| Ардаттуран . . . . . . . . | 7 |
| Пӑваран . . . . . . . . | 9 |
| Карсунран . . . . . . . . | 6 |
| Кӑрмӑшран . . . . . . . | 6 |
| Синкӗлтен . . . . . . . . | 4 |
| Сысрантан . . . . . . . | 2 |

Самарта суйлакан 180 ҫын пухӑнаҫ, вӗсенҫен 94 ҫын хура халӑхран пулаҫ:

| | |
|---|---|
| Самар уйасӗнҫен . . . . | 9 ҫын. |
| Бугульмаран. . . . . . . | 7 |
| Бугурусланран . . . . . | 16 |
| Бузулукран . . . . . . . | 17 |
| Николаевскран . . . . . | 17 |
| Новоузенскран . . . . . . | 17 |
| Ставропольрен . . . . . . | 11 |

Уфа кӗпӗрнинҫен 150 ҫын суйламалла, вӗсенҫен 88 ҫын хура халӑхран пулаҫ:

| | |
|---|---|
| Уфа уйасӗнҫен . . . . . | 8 ҫын. |
| Белебейрен . . . . . . . . | 19 |
| Бирскран . . . . . . . . | 25 |
| Златоустран . . . . . . . | 5 |
| Мензелинскран . . . . . | 20 |
| Стерлитамакран . . . . . | 11 |

Ҫӑвашсем, епӗ ҫак ҫырӑва сире Государственная Дума мӗн иккенне пӗлтерес тесе Хусанти пӗр лайӑх, ҫӑвашсене хӗрхенекен ҫынна ҫӑвашла куҫарса ҫыртартӑм.

Çак çырăва çырса пустарма пани пĕр-икĕ уйăх ытла ĕнтĕ. Çак иртнĕ икĕ уйăх хушшинҫе пирĕн аслă Патша хура халăха усă кўрес тесе, çак çырура каланă хыпартан пуçне, халăха тата нумай тĕрлĕ ырлăх-усă тума хушнă. Çав çĕнĕрен ырлăхсем çинҫен Вăл октябрĕн 17-*мĕш* кунĕнҫе, тата ноябрĕн 3-*мĕш* кунĕнҫе хыпар тунă. Çав Патшанăн çĕнĕ ырăлăхĕсем çинҫен епĕ сире тепĕр пулас çырура каласа ăнлантарăп.

Н. А. Бобровниковъ.